## Пăлхар классикĕн Христо Ботевăн Петĕр Хусанкай чăвашла куçарнă сăввисем

Ĕмĕрлĕхе пăхать хăватлă Атăл
Пăлхар-чăваш куçĕпеле кунта.
Килех! Сана хăмла çĕршывĕ хапăл,
Сăра лаççи яр-уçă умăнта, -

çапла сума суса каланă чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай 1965 çулта Расул Гамзатовăн хăй редакциленĕ «Лирикă» кĕнекине кĕртнĕ «Савăш курки» ятлă умсăввинче. Çак сăвăрах интернационалла тавракурăмлă поэтăмăр, Дагестанри тăванла халăхсен поэзийĕ чăваш ĕççыннисемшĕн çывăх пулнине палăртса, çапла çырать:

Сăвва-юрра савать Чăваш çĕршывĕ,
Юрру кашни килех вырнаçĕ сан.
Кĕрех, Расул! Тăванлăх ĕмĕр сывă,
Поэтпала поэт ыталашсан.

Сăвă-юрă, чăнкă тусемпе анлă шывсем урлă каçса, халăхсене тăванлатать, пĕр-пĕрин шухăш-кăмăлне, ыр ĕмĕтне, савăнăçĕпе хуйхи-суйхине лайăхрах, çывăхрах ăнланса илме пулăшать - ак мĕнле критерипе хакланă Петĕр Хусанкай куçару ĕçне.

Хусанкайăн тĕлĕнмелле куçару ăсталăхĕ ревюлюцичченхи демократиллĕ литература традицийĕсемпе - И. Я. Яковлев шкулĕн пархатарлă ӳсĕмĕсемпе тата вырăс классикĕсене чăвашла куçарасси Совет влаçĕ пуçлансан уйрăмах хытă аталаннипе тачă çыхăннă. Çак ăсталăх унăн кулленхи ĕçĕ-хĕлĕнче çулсерен туптанса пынă; вăл вара тăван чĕлхемĕрпе ытарайми çыракан юратнă поэтăмăр кăна мар, икĕ чĕлхепе те - чăвашла та, вырăсла та - пĕр тан ăсталăхпа музăна тивĕçтерекен пултаруллă юрăç пулса тăчĕ. Вырăсла тăван чĕлхинчен кая мар пĕлни, пĕтĕмĕшле культура тĕлĕшĕнчен хăватлă эрудициллĕ

пулни Хусанкая ытти халăхсен поэзийĕн илемлĕхне чăвашла та оригиналти пекех сыхласа хăварма май пачĕ.

Вырăс классикăсен А. Пушкинăн, А. Грибоедовăн, С. Есенинăн, В. Маяковскин шедеврĕсене Петĕр Хусанкай чăвашла пуринчен нумай тата пысăк ăсталăхпа куçарнă, 20-мĕш çулсенчен пуçласах тăван халăхăмăра ытти халăхсен илемлĕ литература пуянлăхĕпе паллаштарса савăнтарнă.

Хăшпĕр чĕлхерен, сăмахран, пăлхарларан, Петĕр Хусанкай тӳрех чăвашла куçарма та никамран та малтан пикенчĕ; талантлă тăлмач-поэтăн ĕçĕ питех те ăнăçлă пулчĕ.

1962 çулта паллă пăлхар поэчĕ Ламар Чăваш çĕрĕшывне килсен парса хăварнă сăввисем çинчен ăшшăн çырнă май Петĕр Хусанкай ак мĕнле тĕрĕс шухăш палăртса хăварчĕ: «Пирте пăлхар чĕлхине вĕрентекенсен йышĕ ӳссех пыратъ. Маншăн пулсан, çак сăвăсене пăлхарларан тӳрех куçарни - пысăк савăнăç, мал ĕмĕт».

Пăлхар поэчĕсен сăввисене куçарма Петĕр Хусанкай 50-мĕш çулсенчех тытăннă. Вăл хальхи вăхăтри тĕрлĕ писательсен - Ламарăн, А. Тодоровăн, Э.  Багрянăн М. Грубешлиевăн тата ыттисен сăвви-юррисĕр пуçне пăлхар классикĕсен произведенийĕсене те тăрăшса куçарнă.

Акă пирĕн умра çĕнĕ пăлхар поэзийĕн никĕсне хывнă ирĕклĕх юрăçин Христо Бютевăн мĕнпур сăввисене тенĕпе пĕрех чăвашла куçарса кăларнă «Юрăсемпе сăвăсем» ятлă кĕнеке. Çак классик пĕтĕмĕшпе çирĕм сăвă çырнă; асăннă сборникра вара вунсакăр сăвăпа «Пăлхар коммунин ĕненĕвĕ» ятлă программăлла манифест пичетленнĕ. Вĕсене пурне те Петĕр Хусанкай чăвашла лайăх куçарнă.

Ботевăн çак пĕчĕкçеç кĕнеки Хусанкай ăшă кăмăлтан çырнă умстатьяпа уçăлать те унăн кĕске асăрхаттарăвĕсемпе вĕçленет. Ботев сăнӳкерчĕкĕпе автографне пăлхар художникĕ И. Петров профессор тунă портретран илнĕ. Çапла вара çак темрен те хаклă тирпейлĕ кĕнекере мĕн кирли пурте пур: наука ыйтнипе тивĕçтерсе кăларнă кĕнекех вăл,

анчах унăн тиражĕ çав тери сахал пулни чуна пăшăрхантарать - 2000 экземпляр! Халь ĕнтĕ çав кĕнекене ниçта та тупса илеймĕн.

Кĕнекен «Вилмен вăл, чĕрĕ!» умстатйинче Петĕр Хусанкай чăваш вулаканĕсене Христю Ботевăн паттăр пурнăçĕпе паллаштарать.

Христо Ботев 1849 çулхи январĕн 7-мĕшĕнче Калофер хулинчи Ботю Петков учитель килйышĕнче çуралнă, ачаранпах халăх юррисене юратнă. Одессăри гимназире вĕреннĕ чухнех çамрăк Ботев вырăс классикĕсен - Пуш-кинăн, Лермонтовăн, Некрасовăн, Тургеневăн, Гоголĕн произведенийĕсене вулать, хăй те сăвă çырма хăнăхать, революцилле демократсен Герценăн, Дюбролюбовăн, Чернышевскин, Белинскин вĕрентĕвĕпе çывăх паллашать. Каярахпа вăл наукăлла социализм идейисемпе, Марксрпа Энлельсăн «Комм-уиистсен партийĕн манифесчĕпе», Марксăн «Капиталĕпе» паллашнă. Ботев пăлхар революционерĕсен Румынири организацине ертсе пыраканĕ пулса тăнă, тĕрлĕ хаçатсенче («Пăлхар эмигранчĕсен сăмахĕ», «Ялав», «Çĕнĕ Пăлкари» т. ыт. те) хăйĕн çулăмлă сăввисене, публицистикăллă статйисене, фельетонĕсемпе памфлечĕсене пичетленĕ.

1876 çулхи май уйăхĕнче Христю Ботев, икçĕр çынна яхăн патриотран тăракан отряд пуçлăхĕ (чета Вюешоди) пулса, Дунай юханшывĕ урлă Румыниреn тăван Пăлхарне каçать, асаплă çĕршывне тĕрĕк пусмăрĕнчен хăтарма революциллĕ пăлхав çĕклессишĕн çунать.

Çирĕм çиччĕри поэт-революционер Христю Ботев, тăван Пăлхарийĕн ирĕклĕхĕшĕн тĕрĕксемпе паттăррăн çапăçса, 1876 çулхи майăн 20-мĕшĕнче пуçне хунă. Унăн четине тĕрĕксем Враца хули таврашĕнче аркатса тăкнă, воеводине те тĕрĕк пули пырса тивнĕ. Халĕ çулсерен пăлхар халăхĕ июнĕн 2-мĕшĕнче Христо Ботевпа унăн паттăр юнакĕсем вилнĕ куна асăнса чыс тăвать. Христо Ботев «Хаджи Димитър» ятлă сăввинче Тăван Çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн çапăçса пуç хунă

çынсем вилĕмсĕр тесе каланă витĕмлĕ сăмахсене халĕ Пăлхарире кашниех чĕре патĕнче тытать; акă вăл йĕркесем:

Тоз, който падне в бой за свобода,
той не умира: него жалеят
земя и небо, звяр и природа,
и певци песни за него пеят...

Çак строфана Петĕр Хусанкай çапла куçарнă:

Кам ирĕк куншăн вăрçса пуç хурĕ -
çав ĕмĕр вилмĕ: ăна хĕрхенĕ
çĕр, пĕлĕт, кайăк, тĕнче - мĕнпурĕ,
ун ячĕ юрă пулса çĕкленĕ...

Хăйĕн умстатйине ят пама та Петĕр Хусанкай çак сăввăн пĕрремĕш йĕркине илнĕ: «Вилмен вăл, чĕрĕ!» Тĕрĕсех ăнтĕ: Христо Ботав хăйĕн çулăмлă сăвви-юррипе те, паттăр пурнăçĕпе те халăх асĕнчен ăмĕр-ĕмĕрех тухас çук.

Христо Ботевăн историри пĕлтерĕшне хакласа, пăлхар халăхăн çулпуçĕ Георги Димитров çапла каланă:

«Хальхи саманара демократишĕн, халăх республикишĕн, наци никама пăхăнманлăхĕшĕн, хамăр халăха пур енĕпе те çăклесе малалла ярасишшĕн кĕрешнĕ чух Христо Ботев - ялав пулса тăрать. Çав ялав çĕнĕ демократиллĕ Пăлхар çĕршывĕнче çӳлерен çӳлерех хăпарса вĕлкĕшсе тăрĕ».

Çапла вара, Христо Ботев ячĕ - пăлхар халăхĕшĕн кăна мар, пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи ĕççыннисемшĕн калама çук хаклă ят. Ботев - пăлхар литературин чăн-чăн мухтавĕ, наци геройĕ. Ун пултарулăхĕ çав хушăрах ытти халăхсемшĕн те паха. Вăл хăй произведенийĕсен революцилле хĕрӳлĕхне пула интернационаллă пюэт пулса тăчĕ.

Христо Ботева эпир, чăвашсем, хамăрăн Çеçпĕл Мишшипе юнашар асăнма, пĕрле танлаштарса хисеплеме пултаратпăр пулĕ; вĕсем иккĕшĕ

те кăвар чĕреллĕ поэтсем, чăн-чăн патриотсем, революциллĕ поэзипе тăван халăхсен гражданла туйăм-сисĕмне çӳле çĕклекенсем пулнă. Вĕсен пултарулăхĕнче революцилле кĕрешӳ хĕрӳлĕхĕ пусмăр тĕнчине сивлесе питленипе пĕр пулса шăраннă, ĕççыннисен паянхи ĕмĕт-шухăшĕсемпе тӳр килсе, çулăмлă, малалла чĕнекен сăвă-юрă çуратнă. Илĕмлĕх мелĕсем енĕпе илсен, Христо Ботевпа Çеçпĕл Мишши иккĕшĕ те реализм меслечĕпе усă курнă, анчах вĕсен произведенийĕнче реализм ревюлюциллĕ хăватлă туртăмпа вăйланса пырать. Уйрăмах вĕсене кĕрешӳ теми, «хурăç шанчăк», çĕнĕ, ирĕклĕ те телейлĕ пурнăç çĕнтерессине хытă ĕненсе тăни пĕрлештерет. Çак шухăшсене çирĕплетсе памашкăн вĕсен тĕрлĕ произведенийĕсенчи уйрăм сыпăксене танлаштарса пăхар-ха эппин: Çеçпĕл Мишшипе Христо Ботевăн ытарайми сăввисене тепрер хут вуласа, аса илсе чуна хавхалантарни те питĕ паха. Акă Христо Ботевăн «Кĕрешӳ» ятлă сăввинчен илнĕ йĕркесем:

Сăваплă айванлăх! Миçе ĕмĕр эпĕр
ăспа та, чунпа та унпа кĕрешетпĕр!
Асап аллинче паттăрсем пуç хураççĕ,
тата мĕн тумашкăн вĕсем пултараççĕ?
Тĕнче авалхи сӳсменнех сĕтĕрет-çке,
тиранлăх, суялăх - çаплах хисепре-çке;
çын тимĕр аллах чуптăвать-ха, мăнтарăн,
суя сăмахах ĕненет чурари çĕр;
патак тивертсен - ан шарла эс, кĕлту çеç,
тискер кайăксем сан тирне сӳсе илччĕр,
юпна çĕленсем сăхса илччĕр, йăлт тӳс эс;
турра кăна хытă ĕнен, вара çитĕ:
«Эй, турă, çырлах, эпĕ çылăхлă çын» те;
çакна асра тыт: кама турă юратĕ -

çавна хĕн-асап ытларах вăл кăтартĕ...
Çапла çут тĕнчемĕр! Ултав та чуралăх -
çак пуш çĕр çинче халь патша пулса ларчĕ!
Этем ăруне кунĕн-çĕрĕн, вăрахлăх,
йăхран вăл йăха парăнтарчĕ, пусарчĕ.
Çав çылăхлă, юнлă, куççуллĕ те аскăн,
çĕр вĕççĕр усал ĕçсемпе тискерленнĕ,
çав хурлăх патшалăхĕнче халь васкавлăн
пырать кĕрешӳ, кĕрешӳ хум çĕкленĕ;
ун вĕçĕ сăваплă, вăл çывăх паян...
Сас кайтăр: «Е çăкăр пире, е тăхлан!»

Кĕрешӳпе паттăрлăх теми Христо Бютевăн «1868 çулхи сывпуллашу» сăввинче те уççăн палăрать:

Пуç кăшăлĕпе эс, аннеçĕм,
Чечек çыххипе утса пырăн,
ыталăн та чуптăвăн шăппăн
мана эс чипер çамкаран,—
ик шухăш ăна чиперлетĕ:
е ирĕк, е вилĕм маттуршăн!
Юнланнă патвар алăпа
ыталăп эп савнă хĕре,
чĕрем выляса тапнине
вăл систĕр, вăл туйтăр ун чух;
йĕрсен - чуптуса эпĕ чарăп,
таса куççульне çăтса ярăп...
Вара... Сывă пул-ха, аннеçĕм!
Ан ман эс мана, чун савниçĕм!
Тапранчĕ çар-йышăм, каять,
ун çулĕ хăрушă та чаплă:

тен, эп вăрçăра пуçа хурăп...
Анчах пĕр парне тивĕçсессĕн,
тек ним те мана кирлĕ мар:
«вăл чăнлăхшăн, ирĕкшĕн вилчĕ», -
тесен тăван халăх - çитет...

«Тăванла туслăх» сăвăра та Ботевăн оптимизмлă сасси кĕрнеклĕн янăратъ:

Эпир - пĕртăван: пурăнатпăр
 пĕр шухăшпала, туйăмсем пĕр;
çак çут тĕнчере мĕн пулсан та,
пĕр нимĕншĕн те ўкĕнместпĕр.
Усал тунă эпĕр е ырă -
ăна малалли ăру калĕ.
Паян - алă парччĕ, тăванăм,
утар малалла паттăр халлĕн![7]

Кăвар чĕреллĕ поэтăмăр Çеçпĕл Мишши чĕнсе-шанса çырнисене аса илер-ха; ун сăввисеичи кăмăл-туйăм та Ботевăнни пекех харсăр, оптимизмлă, унисонла килĕштерўллĕ пулни куçкĕретех курăнать:

Чăваш! Чăваш!..
      Чăваш! Чăваш!..
Сан ыйăхлă уюсене,
Сан лăпкă кăмăллă, ачаш,
йăваш-айван ялусене
Савмашкăн манăн халăм çук.
Чăваш тĕнчи çывхарнă чух
Чăвашăн чунĕ йăваш-ши?
Анаслă ыйăхăн ăшши -
Вырăнлă-ши?.. Вырăнлă-ши!..
Тăван чăваш хăюллине,

вăл вăйлине курасчĕ ман.

Чăваш!..

Çĕклен те, çунатлан!

Куçна тĕлле хĕвел çине.

(«Чăваш, чăваш!..» 1921).

Çеçпĕл Мишшинчен гражданла лирика произведенийĕсем çырма хăй вĕреннĕ, унăн мăнпур сăввине чун-чĕрипе туйса илнĕ Петĕр Хусанкай, паллах, идейăллă содержанипе илемлĕх мелĕсемпе Çеçпĕл произведенийĕ-сеие çывăх тăракан Ботев сăввисене те питĕ хавхаланса куçарнă.

Анчах, тем пек тăрăшсан та, урăх поэт, уйрăмах тата ют çăршыв пюэчĕ çырнă произведенин идейăллă содержанийĕпе илемлĕх пуянлăхне тепĕр чĕлхепе ахаль каласа панипех уçса кăтартаймăн. Çавăнпа та Хусанкайăн Ботев вăхăтĕнчи Пăлхарти пурнăçа, историлле лару-тăрăва лайăх пĕлнипе пĕрлех пăлхар поэчĕн илемлĕх çӳп-çипе хăйĕнни пекех аван, çăмăллăн та виçеллĕ усă курма хăнăхса çитмелле пулнă. Ботевăн сăвă техникине, илемлĕх мелĕсене, сăнарлăх йĕркине, сăмах янравлăхне, ритмикипе рифмисене, тĕрлĕ интонацие, оригинал чĕлхин саккунĕсене хытă пăхăнса ĕçлеме тивнĕ. Пирĕн талантлă пюэтăмăр çак ĕçсене пурне те чыслăн туса пынă.

Христо Батевăн поэзи стилĕнче пуринчен малтлан палăрса тăракан пахалăх - ун сăввисем халăх сăмахлăхĕпе уйрăлми тачă çыхăнса тăни, сăввисене вăл ятарласа юрлама тесех çырнă тейĕн. Ботев пултарулăхĕшĕн - сюжет енчен те, илемлĕх тĕлĕшпе те - фольклор витĕмĕ хăватлă пулнине эпир унăн нумай строфинче асăрхатпăр. Анчах халăх юррисенчи сăнлăхсемпе - танлаштарусемпе, эпитетсемпе, повторсемпе - вăл хăй халлĕн кăна усă курман, вĕсене хăйĕн ревюлюциллĕ шухăшĕпе килĕштарсе çĕнетнĕ. Тĕслĕхрен, «Аннене», «Хаджи Димитăр», «Хайдуксем» произведенисене илсе пăхма пулать.

«Аннене» сăвăра ют çĕршывра мĕскĕннĕн çӳрекен лирикăлла герой хăйĕн амăшне, шăпах халăх юррисенчи пек, хăй тем çул çӳресен те телейне те, чапне те тупайманни, тăван-пĕтенсенчен катара кăлăхах хурлăх-нуша курса тертленни çинчен кулянса пĕлтерет. Кунта риторикăллă ыйтусем, чĕнсе каланисем, икшер хут каланисем (повторсем) нумай. Петĕр Хусанкай, халăх сăмахлăхĕпе литературăра мĕнле ăнăçлă усă курмаллине «Тилли юррисемпе» лайăх кăтартса панă пюэтăмăр, Христо Ботевăн асăннă сăввине, халăх юррисен çеммине пăхăнтарса, ăста куçарма пултарнă. Акă танлаштарса пăхар-ха чăвашла куçарнине оригинал тексчĕпе:

...Чăн юрату та пĕр эсĕ маншăн, Освеы теб, мале, никого нямам,
чăн ĕненӳ те, таса аннеçĕм; ти си за мене любов и вяра;
анчах сана та хал çук по тука вече не се надявам
савмашкăн тебе да любя: сърдце догаря!
ĕлĕкхи евĕр: сӳнет чĕреçĕм! Мнаго аз, ыале, много мечтаях
Нумай, нумай эп ĕмĕтленеттĕм: щастие, слава да видим двама;
телей те, чап та санпа пĕрлех эп, сила усещах — що не желаях?
аннеçĕм, курăп, туянăп, Но за все желби приготви яма!
теттĕм, Една сал клета, една остана:
халь ак пурне те алтса чикетĕп! в прегръдки твои мили да Пĕр ĕмĕт юлчĕ, çавна усратăп: падна,
Сан ытамна ман çитсе ӳкесчĕ, та туй сърце младо, таз душа чун ма ыратнă - йăлт пĕлтересчĕ страдна
кала-кала та, йĕрсе ярса та... да се оплачат тебс горкана...
Аттеçĕме те, йăмăкăма та, Баща и сестра и братя мили
Шăллăмсене те ман ыталасчĕ; аз да прегърна искам без злоба,
вара пур шăнăр шăнса тамалатăр пък тогаз нека измръзнат жили,
пък тогаз нека изгния в гроба!

сĕм тупăках ман кĕрсе выртасчĕ!

Сăввăн юлашки йĕркине «сĕм тупăках ман кĕрсе выртасчĕ!» тесе куçарни шухăша кăштах оригиналтан пăрса ярать, «выртасчĕ» глагол кунта çын тупăка кĕрсе выртма хăех ĕмĕтленнĕ пек кăтартать. Пăлхарла «пък тогаз нека изгния в гроба» тенине сăмах хыççăн сăмах куçарсан вара çапларах пулать: «Ун чух, ан тив, çĕрем эп шăтăкра». Лирикăлла герой хăйĕн паттăр ĕçне тусан вилме те хатĕр, анчах ятарласах

вилесшĕн мар-тăр. Кунашкал пăрăнусене куçару çитменлĕхĕ тесех каласшăн марччĕ эпир, анчах хăшпĕр чухне шухăш пачах улшăнса каясран шикленмелле. Телее пула, Хусанкайăн куçарăвĕнче ун пек кăлтăк-шăйрăксем çукпа пĕрех. Тепĕр ик-виç тĕслĕх илсе кăтартма çеç пулагъ:

Пĕрремĕш тĕслĕхĕ «Элегирен»:

А бедният роб търпи, и ние
без срам, без укор, броиме
време,
откак е в хомот нашата шия
откак окови влачи народа,
броим, и с вяра в туй скотско
племе
чакаме и ний ред за свобода!
(16 стр.)

Чура тӳсет вăл. Çапах та хамăр -
Мăя сӳсмен пит хĕсет-çке,

тетпĕр, -
Кун-çул шутлатпăр пĕр
вăтанмасăр;
Çав кĕтĕвех-çке шанатпăр
çирĕп,
ӳпкелешмесĕр ĕмĕтленетпĕр,
Выльăхранах-çке кĕтетпĕр
ирĕк!
(24 стр.)

Ботев строфине сăмах хыççăн сăмах, йĕрке хыççăн йĕрке куçарсан, акă еплерех пулса тухать:

Мĕскĕн чура чăтать, эпир те
намăссăр, ӳпкевсĕр, вăхăт шутлатпăр:
çавăнпа хăмăтра пирĕн мăйсем,
çавăнпа сăнсăр туртать-çке халăх,
шутлатпăр, вара, шанса çав выльăх йăхне,
кĕтетпĕр эпир те черет ирĕке!

«Выльăх йăхĕ» тесе Ботев пуян пусмăрçăсене, чиркӳ çыннисене, тӳре-шарана калать. Малтанхи куçарупа сăмах хыççăн сăмах куçарни хушшинче шухăш анлăшĕ енчен уйрăмлăх пурри кĕретех курăнать.

Тепĕр тĕслĕхĕ «Хупахра» сăвăран:

| | |
|---|---|
| Ще да пия напук врагу, | Эп ĕçеп - патриота та, |
| нацук и вам, патриоти! | тăшмана та тавăрасшăн! |
| Аз веч нямам мило, драго, | эп тăна халь çухататăп, |
| я вий... вий сте идиоти! | эсĕр... тăр ухмах таврашĕ! |
| (54 стр.) | (31 стр.) |

Сăвă содержанийĕ тăрăх, «Патриоти» тесе Христо Ботев хупахсенче кăкăрĕсене çапа-çапа мухтанса, ĕçсе, кăшкăрашса çӳрекен пуян-куштансене, чорбаджисене, пуп таврашĕсене, çичĕ юта халăха çаратма аякран пăхса тăрсах ирĕк паракан суя патриотсенчен хытă тăрăхлать, çавăнпа çиллине шăнараймасăр юлашкинчен вĕсене «эсир идиотсем» тесе каласа хурать. Çакнашкал суя патриотсене витĕмлĕ питлесе, Христо Ботев 1873 çулта ятар-ласа тепĕр сăвă та çырнă, ăна «Вăратакан» хаçатра пичетлесе кăларнă, ячĕ унăн - «Патриот», паллах ĕнтĕ, кунта та шахвăртса каланă. Çак сăвă эпиграмма е сарказмлă памфлет пекех янăрать:

Патриот - чунне вăл парĕ,
ирĕк, ăслăлăх тесессĕн;
анчах хăйĕн чунне мар çав,
халăхăн чунне леçесшĕн!
Вăл пурне те ырă тăвĕ,
мĕншĕнни паллах - укçашăн,
Мĕнле çын апла вара вăл?
Вăл чунне сутса пурнасшăн.
(52 стр.)

«Хупахра» сăвва куçарнă май вара тăлмач «патриот» сăмахпа, хăй те сисмесĕр, тӳрремĕнех усă курнă, лирикăлла герой «патриота, тăшмана та тавăрасшăн» пек пулса тухать. Ку питĕ пысăк йăнăш, вăл произведени шухăшне урăхлатса ярать, чипер революционертан пурне

те курайман нигилист туса хурать. Çак тĕслĕх куçару ĕçĕнче контекст та, поэтăн пĕтĕм пултарулăхĕ те тăлмачăн куçĕ умĕнчех пулмаллине аван кăтартать.

Куçарнă кĕнекене тепĕр ик-виç тĕлте Петĕр Хусанкай кăшт вырăсларах пуплев çаврăнăшĕсем кĕртсе янă, паллах, ăнсăртран-тăр. Тĕслĕхрен: «Аннеçĕм, *сана* эпĕ *хаклă,* //эс халь шухăшлатăн: ыран, // тӳлек Дунай урлă каçуçăн, // тен, хурĕ пуçне савнă ывăл!» (13-14 стр.). Кунти хăшпĕр йĕркесем вырăсларан сăмах хыççăн сăмах куçарса тунăскерсем: *«Сана* эпĕ *хаклă» -* «тебе я дорог» (вырăсла) - «мил съм тш» (пăлхарла); чăвашла *саншăн эпĕ хаклă* темелле пулĕ.

Тепĕр тĕслĕх: «Пире пуçсене тайтармĕ // çӳлти пуш чунсен пуш кумирĕ» (23 стр.). Çак предлажение ăнланса илме хĕн: темскер каласшăн пулнă тăлмач? Оригиналта вара шухăш питех те уçăмлă. Унта социаллă питлев ил-тĕнет: «И глава ний няма да сложим // пред страсти и светски кумири...» (17 стр.). Çитменнине тата чăвашла *пуçсене тайтараймĕ* тани лайăхрах пулъ - *пуçа тайтараймĕ* тени лайăхрах пек, мĕншĕн тесен *алă парать, куç хĕсет* йъшши сăмах çаврăнăшĕсенче япала ячĕсене нумайлă хисеп формипе мар, пĕрреллĕ хисеп формипе калани вырăнлăрах.

Юлашки тĕслĕх: «Тӳсме çук сивĕ, йĕрӳ, куççулĕ - // чĕрӳ тулли вăл тултарчĕ хурлăх» (64 стр.). Кунта юлашки предложени кăнттам; çитменнине тата грамматикăллă çыхăну çук: *вăл* местоимени нимĕнпе те çыхăнса тă-масть. Çакна оригиналпа танлаштарар: «И студ, и мраз, и плач без надежда навяват на теб скръб на сърцето» (50 стр.). Çак йĕркесене Христо Ботев хăйĕн тусне, Василь Левский революционера (1837 - 1873) тĕрĕксем çакса вĕлерсен çырнă, паттăр вилĕмĕшĕн çутçанталăк та хурланнине олицетворени мелĕпе халăх сăмахлăхĕнчи евĕр аван кăтартса панă.

Петĕр Хусанкай куçарса кăларнă кĕнекене темиçе хут питĕ тимлĕ вуласа тухсан та, унта урăх нимĕнле кăлтăк та асăрхамарăмăр. Пĕтĕмĕшле илсен, пăлхар пиччĕшĕн сăвви-юррине чăваш поэчĕ чуна савăнтармалла, хăлхамăра килвентермелле ăста куçарнă. Çак ĕçре вăл хăйĕн çулсеран хăватланса пынă куçару ăсталăхĕпе те, халăх сăмахлăхĕн илемлĕх арсеналĕпе те ăнăçлă усă курнă.

Халăх сăмахлăхĕнчен илнĕ сăнарсемпе метафорăсем Христо Ботевăн уйрăмах «Хаджи Димитăр» ятлă сăввинче палăраççĕ; жанр енĕпе илсен, ăна баллада теме пулать. Халăх ирĕклĕхĕшĕн çапăçса пуçне хуракан паттăрăн суранне çутçанталăк вăйĕсем те, тискер кайăк таврашĕ те - пурте сиплеççĕ. Христо Ботев тĕлĕнмелле пысăк пĕлтерĕшлĕ, философилле тарăн шухăшлă пĕтĕмлетĕве çирĕплетме халăх сăмахлăхĕнче паллă вырăн йышăнакан сăнарсемпе усă куратъ, çĕр-пĕлĕте, Балкан тăвĕсене, вăр манпала çут тĕнчене олицетворени мелĕпе чĕрĕ евĕр сăнлать, паттăрăн хутне кĕрекетсем йышлине, çавăнпа вăл вилĕмсĕр пулнине кăтартать. Çав сăнарсем Хусанкай куçарăвĕнче те тĕрĕс-тĕкел упранса юлнă:

Кам ирĕк куншăн вăрçса пуç хурĕ -
çав ĕмĕр вилмĕ: ăна хĕрхенĕ
çĕр, пĕлĕт, кайăк, тĕнче - мĕнпурĕ,
ун ячĕ юрă пулса çĕкленĕ...
Мăн ăмăрткайăк парать ыр сулхăн,
суранне кашкăр çуллать йăвашшăн;
хăюллă кăйкăр-юлташ маттуррăн,
ăна тăван пек пăхать ачашшăн.
Каç карăнсассăн тухать шур уйăх.
Тем чухлĕ çăлтăр çӳлте капланнă.
Кашлать юманлăх, çил-тăвăл çуйĕ,
хайдук юррийĕ кĕрлет Балканăн!..

(33 стр.)

Ботев пултарулăхĕ пире литературăпа халăх сăмахлăхĕ хушшинчи тачă çыхăнăва, халăх сăмахлăхĕнчи сăнлăхсем илемлĕ литературăна сăнарлăх кўнине аван кăтартса параççĕ.

Ботевăн илемлĕх мелĕсене, вăл тунă сăнлăхсене, паха танлаштарусемпе эпитетсене куçарнă чухне Петĕр Хусанкай чăваш чĕлхинчи пĕр тан пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе, е эквивалентсемпе, сăмах çаврăнăшĕсемпе пĕлсе усă курнă. Акă, тĕслĕхрен, оригиналти тата куçарнă текстри танлаштарусем:

Ей, дружина, хай станете!
Ей я иде - погледнете:
туй е мойта горска птица,
туй е мойта годеница!»
(34 стр., «Пристанала»)

«Эй, дружина! Илтнĕ пулăр,
кам килет - пăхсамăр, курăр:
чун савни чупать васкавлăн,
вăрман кайăкĕ вăл манăн!»
(44 стр., «Таркăн хĕр»)

Нощ бе тъмна като рог,
примъкнах се като смок...
(42 стр., «Ней»)

Мăйрака пек сĕм çĕрле
вăрттăн шурăм çĕленле...
(54 стр., «Арăмне»)

**Паха эпитетсем**

душа млада, бедни народе,
песен любовна, скръб дълбока
думи отровни, сърце мъжко,
юнашко; песни юняшки,
хайдушки;
млада, хубава Стояна търчи с
менци за водица т. ыт. те.
Кажи им, майко, да помнят,
да помнят мене да търсят:

яш чун, мĕскĕн халăх, юрату юрри,
пысăк хурлăх, савăш наркăмăшĕ,
чăн-чăн ар чĕреллĕ те паттăр,
маттур та паттăр хайдуксенĕн юрри;
сарă хĕр-чипер Стоянка -
сулхăн шыв асма васкарĕ

бяло миыесо по скали,
по скали и по орляци
черни ми кърви в земята,
в земята, майко, черната!
(24 стр., «На пращаване в 1868 г.»)

т. ыт. те.
Кала вĕсене - шав астуччăр,
астуччăр, шыраччăр мана:
тусем хушшинче, ăмăрткайăк
вĕçен тĕлсенче - ман шур ӳтĕм,
хура тăпрапа варăшса
упранĕ, аннем, хĕрлĕ юнăм!
(15 стр., «1868 çулхи сывпуллашу»).

Зададе се облак тъмен
откъм гора, от Балкана:
дали ще е дъждец дребен,
или ще е буря страшна?
(57 стр., «Зададе се облак тъмен»)

Пĕчĕк пĕлĕт хураласшăн
вăрман çийĕн, Балкан çийĕн:
лăпкă çумăр çутарасшăн
е хăрушă тăвăл-ши-мĕн?
(37 стр., «Пĕчĕк пĕлĕт хураласшăн»).

Бютев усă курнă эпитетсем халăх юррисемпе кăна мар, унăн хăйĕн пурнăçĕпе те, хăй мĕн-мĕн чăтса-курса ирттернипе те çыхăннă.

«Шурă» эпитета халăх сăмахлăхĕнче пирĕн, чăвашсен те, тăтăшах тĕл пулма тивет, мĕншĕн тасен çав сăмах халăхăн илемлĕх идеалне лайăх кăтартсаа ларать, «шурă» гени «таса» тенипе танлашать: *шурă кĕпе, шурă акăш* т. ыт. те. Ботев вара, халăх сăмахлăхĕнчи пекех, лирикăллла герой сăмахĕсемпе «ман шур ӳтĕм» ăмăрт-кайăк вĕçен тусем хушшинче тесе пĕлтерет.

Пĕр эпитетпах Ботев тĕрлĕ çĕрте нумай пĕлтерĕшпе усă курма пултарать: çав «1868 çулхи сывпуллашу» сăвăрах «хура куçĕ», «хура тăпрапа», «хура тăррапа» тенине тĕл тулатпăр.

Нумай чухне Ботев эпитечĕсем кăмăл-шухăш çĕкленĕвне, хусканăвне пĕлтернипе пĕрлех социаллă пĕлтерĕшпе те янăраççĕ: «Овчар ли по планината, // или иък *клети* сюрмаси!» - «Ту çинчи сурăх кĕтӳç-и // е ялти мăн-тарăн чухăн...» («Хайдуксем» сăвăран). *«Мăнтарăн* чухăн» тени хăех автюрĕ кам майлă пулнине аван кăтартать.

Петăр Хусаикай вара Ботев сăввисенчи паха эпитетсене пĕрне те те куçарнă чух «çухатса» хăварман.

Ботев произведенийĕсенчи фразеологиллĕ сăмах çаврăнăшĕсенче, халăх каларăшĕсене куçарнă чухне Петĕр Хусанкай чăвашларах сăмах çаврăнăшĕсам тума, чăвашла каларăшсемпе усă курма тăрăшнă. Тĕслехрен: «Зави се майка, замая - // камък и падна на сърце» предложение Хусанкай «Кулянса ӳкет хĕрарăм // чĕрине чул тивнĕ евĕр» тесе куçарнă; çавăн пакех тата: «И гласът ми да премине // тихо катю през пустиня!» - «пуш хирти пĕччен сас евĕр // йăнасран сасса хăтарччĕ!»; «Туй е казало // стадо от вълци във овчи кожи» - «Акă мĕнле калаçать, вăтанмасăр, // сурăх тирне тăхăннă кĕтӳ кашкăр».

Ботев поэзийĕн экспрессиллĕ янăравлăхне, сăвăсен лейтмотивне, вĕсен çеммине пусарса калама риторикăлла ыйтусемпе кăшкăрусем, çавăн пекех çынна е çутçанталăка чĕнсе каланисем (обращенисем) нумай пулăшаççĕ. Акă, сăмхран, çак йĕркесене илер-ха:

| | |
|---|---|
| Телейсĕр, мĕскĕн эп çӳренишĕн мĕне<br>ылханнă - çавнах курнишĕн аннем, эс<br>мар-и йĕрсе юрларăн,<br>мана хĕрхентĕн виç çул эс<br>мар-и?<br>(26 стр., «Аннене») | Ти ли си, мале, тъй жално пела,<br>ти ли си мене три годин клела,<br>та скитник ходя злочестен ази<br>и срещам това, що душа мрази?<br>(11 стр., «Майце си») |
| Кала, кала-ха, ман мĕскĕн халăх; | Кажи ми, кажи, бедни народе, |

чура сăпкийĕ кам çакрĕ
саншăн?
(24 стр. «Элеги »)
Юрĕ, вăрлăр та çаратăр !
Кам сире халь тытса чарĕ? Курка
тытнă та - ларатпăр, час çĕкленмĕ
ўсĕр çарĕ!
( 31 стр., «Хупахра») (Çĕршыв-
аннеçĕм, çĕрĕм, ма эс йĕретĕн,
куççуль
тăкатăн? юратнă
Пуçтах çăханĕ, ылханлă кайăк,
кам тăпри çийĕн кăранклататăн?
62 стр., «Василь Левские
çакни»).

кой те в таз робска люлка
люлее?
(15 стр., «Елегия»)
Грабете го, неразбрани!
Грабете го! Кой ви бърка?
Скоро той не ще да стане: !
ний сме синца с чаши в ръка!
(53 стр., «В механата»)
О, майко моя, родино мила,
защо тьй жално, тъй милно плачеш?
Гарваие и ти, птицо проклета,
на чий гроб там тъй грозно
грачеш?
(60 стр., «Обесвание на Васил
Левский»)

Кунсăр пуçне, Христо Ботев хăйĕн сăвви-юррисенче интонаци пуянлăхĕпе тата ритмикăри динамизмпа ăста усă курнине, йĕрке вĕçĕсене кăларса лартнă сăмахсенчи логика ударенийĕсене рифмовкăпа тачă çыхăнтарма пĕлнине палăртмалла. Петĕр Хусанкай та Христо Ботевăн классикăлла произведенийĕсене классиклах ăста куçарма пултарнă, çакă тăван литературăна нумай пуанлатать, пире, пăлхар поэзине юратса чăвашла вулакансене, чĕререн савăнтарать.